Ефимов Анатолий Дмитриевич,
Шупашкарти пĕтĕмшле пĕлӳ
паракан 18- мĕш вăтам шкулти
чăваш чĕлхипе литература учителĕ.

**«Тăван çĕр-шыв – Чăваш Республики»**
**темăпа ирттернĕ уçă урокăн тулли конспекчĕ.**

**Урока ирттернĕ вырăн:** Шупашкарти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан 18-мĕш вăтам шкул.
**Класс:** 9 А.
**Урок тĕсĕ:** Çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок.
**Тема:** Тăван çĕр-шыв – Чăваш Республики.
**Тĕллевĕсем:**
1. Сапăрлăх тĕллевĕсем:
❖ самоопределение -
• *хăйне хисеплесси, хăйĕн ăс-тăн шайне пĕлсе хаклани;*
• *вĕренĕве кăмăлпа хутшăнма явăçни.*
❖ смыслообразование -
• *вĕренӳре харпăр хăй тивĕçлĕхне туйма, хăй вăй-пултарулăхне шанма вĕренни;*
• *кăмăл-сипет енчен хăй тунă ĕçсене сăлтавĕсене хаклама пĕлни.*

2. Пĕлӳ тĕллевĕсем:
❖ метапредметный –
• *харкамлăн пĕлӳсем туянас юхăмĕн пур шайсене те пĕр тĕвве çыхăнтарма май парса аталантарасси;*
• вĕренекенĕн тавра-курăмлăх ĕç-хĕлне йĕркелесси.
❖ регулятивные –
• *харпăр хăй хальлĕн ĕçлес-тăвас туртăм, тимлеме хăнăхтарни;*
• *харпăр хăйĕн хевтипе майĕсене палăртма вĕрентни;*
• *вĕренӳпе кăсăклантарса яма пулăшни;*
• *йывăрлăхсене çĕнтермелли майсене тупса палăртма хавхалантарни.*
❖ коммуникативный –
• *учительпе тата тантăшсемпе хутшăнса вĕренессине планлани;*
• *кашни ачан функцисемпе тĕллевсене, хутшăнусене палăртни;*
• *информацие шырас тата пуçтарас ĕçре хавхалантарасси;*
• *шухăш пĕр пĕтĕмлĕхне, çыхăнулăхне грамматика нормисемпе туллин те тĕрĕс усă курса йĕркипен уçса пама пултарни.*
❖ познавательный –
• *çĕнĕ информаципе; вĕренӳ моделĕсемпе ĕçлени;*
• *курăмлă-сăнарлă шухăшлавпа логикăллă шухăшлава аталантарни, хак пани.*

3. Аталантару тĕллевĕсем:
❖ предметный –
• *ĕç майĕсемпе пĕтĕмлетĕвне, ĕç юхăмĕн результачĕсене тĕрĕслесе хаклани;*
• *тăван çĕр-шыв çинчен калакан тĕрлĕ жанăрлă текстсене итлесе тивĕçлĕ информаци илни;*
• *илемлĕ, ăслăлăх, публицистика тата официаллă ĕç стилĕсемлĕ текстсене ирĕклĕнех ăнланса хак пани;*
• *пĕтĕмлетсе евĕрлеме, çавна май пур пек пĕлӳсемпе тата хăнăхусемпе усă курма вĕрентни;*

**Словарь ĕçĕ:** Мĕн вăл текст? Текстăн темипе тĕп шухăшĕ.

**Урока кирлĕ хатĕрсем:** вĕренӳ кĕнеки (И.А. Андреев, Р.И. Гурьева 9 класс), презентации, «Самант» журналпа «Тантăш» хаçат, Чăваш Республикин карти, ӳкерчĕксем.

**Урок юхăмĕ:**

**I. Хатĕрлев тапхăрĕ.**

Сывлăх сунса ларнă хыççăн фонозарядка тăватпăр: *тăван, тăван çĕр-шыв, хастар, хастарлă пул, пирĕн, пирĕн ентеш….*

**II. Пуплев саманчĕ.**

1. Учитель Чăваш Республики çинчен кĕске текст вуласа парать **(аудировани).**

**Учитель:** *Мĕн ку? Эпĕ вуласа панине мĕнле ăнланатăр?*

**Ача:** *Ку Чăваш Республики çинчен калакан текст.*

**Учитель:** *Тĕрĕс. Ку Чăваш Республики çинчен калакан текст. Апла пулсан эпир паян сирĕнпе мĕн çинчен калаçăпăр?*

**Ача:** *Чăваш Республики çинчен.*

Учитель текст тăрăх ыйтусем парать.

**III. Çĕнĕ тема.**

2. Урок тĕллевне лартать:

**Учитель:** Паян сирĕнпе Чăваш Республики çинчен калаçнисĕр пуçне тата *текст* сăмаха уçса тишкерĕпĕр, унăн темипе шухăшне, тĕсĕсене тупса палăртăпăр. Хамăр çавнашкал текстсем çырса калăплама вĕренĕпĕр. +на тума пире алă айĕнчи словарьсемсĕр пуçне тата проект технологийĕ пулăшĕç. Тархасшăн, пурте словаарьте *текст* сăмаха тупăр. Унта мĕн çырнă?

3. Словарь ĕçĕ:

***Текст** - это несколько предложений, связанных друг с другом по смыслу и грамматически. Текст должен иметь вступление, основную мысль и заключение. А так же главную мысль и тему.*

***Тема** – это то, о чем говориться в тексте, часто отражена в его заголовке.*

***Основная мысль** – обычно передает отношение автора к предмету речи, его оценку изображаемого.*

**Учитель: *(Слайд)*** Текст тĕсĕсем: ўкерсе пани (повествование), сăнлани (описание) тата шухăшлани (рассуждение). Унсăр пуçне текст пĕр енлĕ çеç пулмасть.

Унăн тĕсĕсем те анлă: сăнлавлă ўкерчĕк, шухăшласа сăнлани, сăнлава хаклани тата ытти те…

4. Текст çырни.

**Учитель:** Халĕ хамăр текст çырса пăхăпăр. Тема: «Тăван çĕр-шыв». (Ачасем ĕçлеççĕ. /çĕсене кăтартаççĕ. Кĕске тишкерў.)

- *Текст çырма çăмăл мар. +на пĕлсе калăпламалла.*

5. Кластер: текст валли тĕрев сăмахĕсем (тема) хатĕрлесе унăн проблемисене çутатни, актуаллăхне палăртса анлăлатни.




6. Проблемăсене çутатса сăмах çаврăнăшĕсем тăватпăр:

*Аслă пĕлў, кирлĕ пĕлў, наркăмăш пире кирлĕ мар, сигарет сывлăха сиен кўрет…*

7. Тупнă проблемăсем тавра сăмах çаврăнăшĕсемпе предложенисем тăватпăр. Вĕсене анлăлататпăр. Тĕпчев задачисене палăртатпăр.

*Аслă пĕлў илмелле.*

*Манăн аслă пĕлӳ илмелле.*
*Манăн кирлĕ аслă пĕлӳ илмелле.*
***Манăн, институтра вĕренсе кирлĕ аслă пĕлӳ илмелле.***
*Наркăмăш кирлĕ мар.*
*Наркăмăш çамрăксене кирлĕ мар.*
***Наркăмăш сиенлĕ курăк, çавăнпа та вăл çамрăксене кирлĕ мар.***

8. Тупнă предложенисем çине ыйтусем лартатпăр.

*– Мĕн илмелле?*
*– Аслă пĕлӳ илмелле.*
*– Камăн аслă пĕлӳ илмелле?*
*– Манăн аслă пĕлӳ илмелле.*

9. Тĕрев сăмахĕсем çине таянса тĕпчев ыйтăвĕсем йĕркелесси ***(Ушкăнсем çине пайланса)***:

1. Санăн аçупа аннӳ Чăваш Республикин хăш районĕнче çуралса ӳснĕ?
2. Унта халĕ кам та пулин пурăнать-и?
3. Эсĕ аçупа аннӳн тăван ялне кайса çӳретĕн-и?
4. Ялти çамрăксемпе туслашма çăмăл-и? Мĕншĕн?
5. Яла кайсан эсĕ мĕнле чĕлхепе пуплешме тăрăшатăн?
6. Саншăн чăваш чĕлхи ют мар-и? Сана унпа ăçта лайăхрах калаçма – ялта е хулара? Мĕншĕн?
7. Паянхи хула çамрăкĕсем яла канма çеç каяççĕ тени тĕрĕс-и?
8. Эсĕ ялта aслисене пулăшатăн-и?
9. Ял пурнăçĕ çăмăлтарах е хулара?
10. Ялти пурнăç çинчен мĕн шутлатăн? Унти каччăсемпе хĕрсем сан шутпа еплерех? Пурнăçран юлса пымаççĕ-и?

10. Ыйтусем çине хуравласси ***(харпăр калаçу)***:

*Манăн аттепе анне Етĕрне районĕнче çуралса ӳснĕ. Унта манăн кукамипе кукаçи тата мăн аккасем пурăнаççĕ. Эпĕ аттепе анне ялне кашни çулах кайса çӳретĕп, унта канатăп, кукамипе кукаçине килти ĕçсене тума пулăшатăп. Каçсерен эпĕ клуба е урама тухатăп. Унта манăн юлташсем пур. Эпĕ вĕсемпе питĕ туслă. Нумайрах чухне эпир вĕсемпе чăвашла калаçатпăр, анчах та хăш-пĕр чух вырăсла калаçнисем те пулаççĕ. Маншăн чăваш чĕлхи ют мар. Анчах та ялти каччăсемпе хĕрсем хăйсем вырăсла калаçаççĕ те – эпĕ те вĕсемпе вырăсла калаçатăп….*

**IV. Çирĕплетӳ тапхăрĕ.**

11. Панă темăпа текст йĕркелеме проект технологин тапхăрĕсене аса илсе çирĕплетсе хăварни ***(Презентаци).***

1. *Ĕç теми.*
2. *Тема актуаллăхĕ.*
3. *Ĕç тĕллевĕсем.*
4. *Ĕç задачисем.*
5. *Тĕпчев обьекчĕ.*
6. *Тĕпчев предмечĕ.*
7. *Ĕçе пурнăçлама усă курнă мелсемпе меслетсем.*
8. *Гипотеза.*
9. *Кĕтнĕ çимĕçĕ.*

12. Панă кластерпа усă курса хăйсен ĕçĕсене проектлани.

**1. Ĕç теми.**

Республикăри ялсенчи çамрăксем.

**2. Тема актуаллăхĕ.**

Ялсенче пурăнакан çамрăксем кун-çул таппинчен юлмасăр хăйсен пурнăçне туптамалли вырăнне, нумай чухне, паян пурнăç çине кӳренсе аллисене усса лараççĕ. Хутран-ситрен вĕсем чăвашла манса эрех-сăра, пирус туртма та пăхаççĕ.

**3. Ĕçĕн тĕллевĕсем.**

Ял çамрăкĕсемпе калаçса вĕсене кăсăклантаракан ыйтусене тупасси, çав ыйтусен актуаллăхне палăртасси.

**4. Ĕç задачисем.**

– Республикăра тухса тăракан хаçат-журналсенче хамăн темăна çывăх материалсене тупса паллашасси;

– Ял çамрăкĕсемпе калаçса ыйтусене палăртасси;

– Шухăшсене пухса калăпласси;

– Текст йĕркелесси.

**5. Тĕпчев обьекчĕ.**

Ялта пурăнакан çамрăксем. Вĕсен пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ.

**6. Тĕпчев предмечĕ.**

Ялта пурăнкан çамрăксен пурнăçĕ.

**7. Ĕçе пурнăçлама усă курнă мелсемпе меслетсем.**

– Тĕпчев.

– Хаклани.

– Калаçни.

– Пĕтĕмлетни.

**8. Гипотеза.**

Ман шутпа, паянхи çамрăксен ыйтăвĕсене тӳремĕн, куçа-куçăн, çутатса пани – пурнăçа курма пулăшать кăна.

**Кĕтнĕ çимĕç.**

*Ман атте Х.рл. Чутай: анне Красноармейски район.нчен? +уллахи каникулта эп. анне ялне: Хусакассине ăĕрет.п? Уйçх е ытларах унта канатçп? Кукаăи-куками ă.ре к.ч.ă: ялта анне аппçш. пурçнать? Хама таăти т.нче щçтçкне килсе лекн.н туймастçп? Туссем: ман пек хуларан килн. ăамрçксем пур: в.семпе калаăса илет.н? +итменнине ял. Шупашкартан аякра мар: эрнере п.рре хулана килсе каятçп?*

*Хусакасси пысçк мар: ăамрçксем сахалтарах? Хула ачисемпе танлаштарсан: в.сем кçшт айвантарах темелле-и: примитивлçрах пек туйçнаăă.? Çс-тçн пирки каламастçп .нт.: воспитани ăапларах в.сен: вырçсла каласан _ "закомплексованнçйрах"? Эрех .ăкелекенсем те пур в.сем хушшинче?*

**V. Урока пĕтĕмлетни.**

Ачасем кашни хăйĕн проектне вуласа парать.

**VI. Киле ĕç пани.**

Çитес шăматкунпа вырсарникунсенче яла кайса курăмлă ыйту ирттерсе проекта пурнăçламалла.

**VII. Ачасен проект темисене хаклани.**

**VIII. Сыв пуллашни**.